23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 НОЯБРЬ 3 ЫТЛАРИКУН 275 (6192) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Производствăри дисциплинăна çирĕплетсе пырăр! Хурçă пек çирĕп дисциплина тата организованность—эпир тăшмана çĕнтерессин шанчăкĕ пулса тăрать!

(Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен)

Колхоз тупăшне валеçме тĕплĕн хатĕрленер

Ялхуçалăх çулĕ вĕçленсе пырать. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи малтанхи ялхуçалăх çулĕнче пулнă урокçене шута илсе, пирĕн колхозсемпе МТС-сем кăçал пĕлтĕрхинчен чылай лайăхрах ĕçлерĕç, пуян тырпула пухса кĕртес ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек хастарлăн кĕрешрĕç. Паллах, хĕруллĕ ĕçĕн результачĕсем те савăнăçлă пулĕç, колхозницăсемпе колхозниксем, пирĕн тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар çетелĕклĕ тараналах апат-çимĕç илĕç.

Анчах, кăçалхи ялхуçалăх çулне пĕтĕмĕшпех тата ăнăçлăн вĕçлес тесен, пирĕн нумай вăй хурса ĕçлемелле-ха. Колхозсемпе совхозсенче халĕ туса çитермен ĕçсем нумай-ха.

Чи малтанах, кĕрхи кунсен кашни сехечĕпе усă курса, кĕрхи çĕртме сухине туса пĕтерес пулать. Çак енĕпе хăшпĕр районсемпе колхозсем халь çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Килес çулхи тырпулăн никĕсне халĕ хывса хăварма кирлине вĕсем тивĕçлипе ăнланса илмен. Çакă вара хальхи йывăр вăхăтра палăрах та килĕшÿсĕр. Кĕрхи çĕртме вăйлă тырпул туса илес ĕçре мĕнле вырăн йышăнса тăнине ăнланса илсе, партипе совет работникĕсен, колхоз руководителĕсен туртăм вăйĕн 40 процентне сухана кÿлмелле. Фронтри пек ĕçлемелле эрне хушшинче кĕрхи çĕртме тăвас плана пĕтĕмĕшпех тултармалла.

Ку çеç те мар. Кăçалхи çула ăнăçлăн вĕçлес тесен, колхозсен авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсене те хăвăртлатас пулать. Анчах çак ĕçсем те халĕ çителĕксĕр пулса пыраççĕ-ха. Авăн çапас ĕçре молотилкăсемпе туллин усă курманни тĕп çитменлĕх пулса тăрать. Ăна пĕтерес пулать. Витĕ итемсенче вырнаçтарнă молотилкăсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлемелле. Государствăна валли кашни кунах тырă леçме тăрăшмалла. Çак ĕçсене ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн вара колхозсен тупăшĕсене ĕç кунĕсем тăрăх валеçме тытăнма пулать.

Колхоз тупăшне валеçесси питĕ ответлă ĕç. Вăл ĕçе туса ирттерме тĕплĕн хатĕрленес пулать. Çакна вара пурте мар ăнланаççĕ.

Пĕлтĕр тырпулсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçес ĕç пирĕн республикăри чылай районсенче вăраха кайрĕ. Тырпула колхозсем звеносемпе бригадăсенче уйрăмăн шута илсе пыман пирки колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлессине чылай йывăрлăхсем пулчĕç, çавна пула вара ĕç дисциплини сÿрĕкленчĕ. Райсоветсен исполкомĕсемпе МТС-сен директорĕсем колхозсенчи ревизи комиссисен ĕçне юсаса ярассишĕн тăрăшманнипе пула хăшпĕр колхозсенче тырпула çаратнисем те пулнă. Çак çитменлĕхсем кăçал пулмалла мар. Çавăнпа колхоз председателĕсемпе счетоводсен тырпулсене валеçес ĕçе халех хатĕрленме тытăнмалла. Малта пыракан колхозсенче çапла тăваççĕ те. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красная Армия» колхоз 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçленĕ. Колхозăн пайланман фончĕсене уйăрса хунă, государство умĕнчи обязательствăсене парса татнă. Колхоз правленийĕ тупăш отчетне туса хатĕрленĕ, ĕçкунĕсен ведомоçне тунă. Кунта кăçал кашни ĕçкунĕ пуçне 3 килограмм тырă, 8,5 килограмм çĕрулми, 30-шар грамм пыл валеçсе пама шутлаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак кунсенче Чăваш республикинчи колхозсенче тырпулсене валеçме хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-яврĕ. Совнарком çак ĕç çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене хăвăртлатма хушса хăварчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ райсоветсен исполкомĕсене çакăн çинчен асăрхаттарчĕ: колхозсенче учет ĕçне кăтартуллăн йĕркелесе ямалла, илмелли укçа-тенке колхозсен халех илсе çитермелле, колхоз продукцине салатса ярассине хирĕç кĕрешмелле, кăçалхи ноябрь уйăхĕнче пур колхозсенче те ревизи туса ирттермелле, декабрьте вара инвентаризаци туса ирттермелле. Учет енĕпе юлса пыракан колхозсене унта инструкторсемпе опытлă счетоводсем ярса пулăшмалла.

Колхозсенче тупăшсене валеçнĕ чухне общественнăй хуçалăх çине уйрăмах çавăрăнса пăхас пулать. Государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă хыççăн тивĕçлĕ фондсем хывса хăвармалла, фондсене пĕчĕклетме хăтланнисем пулмалла мар.

Тупăшсене валеçнĕ чухне ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановление çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла. Ĕçĕн результатне кура кăна тырă памалла, авансла ытлашши парса тăкас йăлана пăрахăçламалла. Çавăнпа та колхозниксен ĕçкунĕсен хисепне, кашни бригада мĕн чухлĕ тырă туса илнине тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла. Тырпулсене тата колхозăн ытти тупăшĕсене валеçнĕ чухне Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе вĕсен çемьисем çинчен тăрăшма кирлине яланах асра тытас пулать.

Колхозсенче тупăшсене тĕрĕс тата вăхăтра валеçесси—хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан задача пулса тăрать. Çак ĕçри çитменлĕхсем колхозри дисциплинăна начарлатаççĕ, колхозниксем общественнăй хуçалăхшăн тăрăшассине вăйсăрлатаççĕ. Çавăнпа та партипе совет организацисен, çĕрĕç органĕсен 1942 çулта колхозсенче тупăшсене валеçес ĕçе хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе большевикла тимлĕх кăтартса ĕçлемелле.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Чугунçул валли—вутă

ВĂРНАР. Калинински районри колхозниксем чугунçул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Вăрнар леспромхозĕн Пинер участокĕнче ĕçлеççĕ. Октябрь уявне çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тума хатĕрленсе, вăрманта ĕçлекенсем хăйсен ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Вутă касакан рабочисем Е. Прокопьев (Айкăш ялсоветĕнчен) тата Н. Унтрицов (Юманай ялсоветĕнчен) юлташсем кулленхи нормăна 480 процент таран тултараççĕ. Çавăн пекех Кÿлхĕрри ялсоветĕнчен пынă Я. Судов, В. Константинов, В. Пушакова, В. Кумарова юлташсем те нормăран виçĕ хута яхăн тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Рабочисемпе работницăсем хушшинчи ăмăртăва çапла организациленине пула, Калинински район чугунçул валли вутă хатĕрлес плана октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне касас енĕпе 92,2 процент, турттарас енĕпе 75,3 процент тултарчĕ.

Вăрманти рабочисемпе работницăсем татах та тухăçлăрах ĕçлеме пултараççĕ, анчах çапла тума вĕсене хăшпĕр çитменлĕхсем чăрмантараççĕ. Сăмахран, учетчик Леонтьев юлташ вутă турттаракансен ĕçне вăхăтра тата тĕрĕс шута илмест, час-часах ĕçе тухнисенех ĕçе тухман тесе, е тата тухманнисенех тухнă тесе йăнăш сведени парать. Çапла туни ĕç дисциплинине пăсать, тăрăшса ĕçлекенсене кÿрентерет, прогульщиксене татах та иртĕхтерет.

Тепĕр çитменлĕх вăл—туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курманни. Леспромхозпа леспродторг директорĕсем Сазоновпа Ефимов юлташсем вăрманта ĕçлес лашасене—4—5 лав—апат-çимĕç турттарма Вăрнара, тепĕр чух тата Вăрнартан 18—20 çухрăма та, çÿретеççĕ. Çапла вара çав лашасем вăрмантан кунне 30—40 кубометр вутă турттарса тухас вăхăта çухатаççĕ. Туртăм вăйĕпе çапла йĕркесĕр усă курни плана тултарассине вăраха тăсса пырать.

Вăрнар леспромхозĕнчи руководительсем асăннă çитменлĕхсене халех пĕтерме тивĕçлĕ.

С. КОШКИН.

Йывăрлăхсене сирсе

Ĕçре йывăрлăхсем пулчĕç пулин те, Шупашкарти макарон тăвакан фабрика октябрь уйăхĕнчи производство планне 101 процент тултарчĕ, планран ирттерсе 13 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Уяв умĕнхи ăмăртура Золовăпа Денисова мастерсен сменисем лайăх ĕçлерĕç. Уйăхри ĕçсен заданине Золова юлташăн смени 164 процент, Денисова юлташăн смени 146 процент тултарчĕ. Работницăсенчен Сергеева, Афанасьева тата Борисова, юлташсем хăйсен уйăхри нормине 1,5—2 хут ирттерсе тултарчĕç. Тарасовăпа Яковлева юлташсем двухсотницăсем пулса тăраççĕ.

Ĕççыннисемпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли апат-çимĕç туса кăларнипе пĕрлех фабрика коллективĕ перекетлĕхшĕн кĕрешет. Иртнĕ уйăхра эпир, электроэнергипе типтерлĕн усă курса, ăна 2 пин киловат-сехет чухлĕ перекетлерĕмĕр.

В. СТОЛЯРОВ.
Фабрика директорĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчик** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Иртнĕ эрнере, октябрĕн 25-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсем çинче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 202 самолетне пĕтерсе тăкнă, пирĕн çав вăхăтрах 128 самолет пĕтнĕ.

* * *

Октябрĕн 31-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче противникăн войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 çити автомашинине тата 3 прожекторне пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 7 складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрнĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе тăнă. Уйрăм участоксенче пирĕн чаçсем контратакăсем туса пăртак малалла куçнă. Ирхине заводсен районĕнче нимĕç пехотин пĕр полкĕ, артиллерипе авиаци хатĕрлесе çитернĕ хыççăн, наступлени пуçласа янă. Çапăçу 3 сехет хушши пынă. Совет войскисем, противника пысăк сухатусем кÿрсе, ăна каялла, малтанхи позицисем патнех, хăваласа янă. Пирĕн боецсем çавăнтах, тăшмана йĕркене кĕмешкĕн вăхăт памасăр, контратака пуçласа янă та противникăн тĕреклетнĕ темиçе пунктне йышăнса илнĕ. Хула оборонин кăнтăр секторĕнче Н-ски часть нимĕç окопĕсен малти линине тытса илнĕ. Çав çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн артиллерипе минометсем пенипе тата авиаци тапăннипе нимĕçсен пехотине 2 полка çити сапаласа янă, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ, 8 танк, 20 автомашина, артиллерин 4 батарейине тата минометсен 6 батарейине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кĕрешнипе тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 13 самолетне ÿкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ тата разведка тунă. Н-ски подразделенири разведчиксен ушкăнĕ тăшманăн дзочĕсем патне систермесĕр шуса пынă та вĕсем çине гранатăсем вăркăнтарма пуçланă. 3 пулемет тата 35 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн снайперĕсем 80 салтакпа офицера вĕлернĕ.

* * *

Нальчик районĕнче пирĕн чаçсем оборонăра тăрса хĕрÿллĕн çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем 370 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ тата çапăçура нимĕçсен 2 танкне тытса илнĕ. Тепĕр участокра противник пирĕн оборона ăшне кĕрсе кайма пултарнă. Пирĕн чаçсем хаяр çапăçусенче тăшмана пысăк сухатусем кÿнĕ хыççăн çĕнĕ позици патне куçнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем пĕр питĕ кирлĕ высотана йышăнса илнĕ. Çав высоташăн пынă çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 2 орудине, 10 станковăй пулеметне, 50 автоматне, нумай винтовка, 4 радиостанци, 6 автомашина тата 2 боевой ялав тытса илнĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем хăйсен пехотин пĕр батальон ытла вăйĕпе пирĕн позицисене атакăланă, анчах та вĕсене пирĕннисем картлакан вутçулăмпа каялла сирсе янă.

* * *

Новороссийск районĕнче моряксен разведка тăвакан ушкăнĕ противникăн тылне кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем 100 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, пулеметсен 6 точкине тата боеприпассемпе продовольстви складне пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçри снайпер Слепенко юлташ юлашки вăхăтра нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 49 çынна вĕлернĕ, Гончаренко юлташ — 19, Филичкин юлташ 25 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн позицисене нимĕçсен 7 танкĕ атакăланă. Бронебойщик-казахсем—Шургей Малаев, Джюнс Ахмедзянов тата Карк Байзаков юлташсем тăшмана пĕр хăрамасăр кĕтсе илнĕ. Нимĕçсен малта пыракан танкĕ бронебойщиксен окопĕ патне 100 метр çывăха пырса çитсен, вĕсем çав танксем çине пеме пуçланă. Совет патриочĕсем Малаев, Ахмедзянов тата Байзаков юлташсем нимĕçсен танкĕсене пĕрин хыççăн теприне 5-шне те пĕтерсе тăкнă. Улттăмĕш танкĕ окоп çинех пырса çитнĕ. Карк Байзаков граната ярса илнĕ, анчах та ăна танк çине вăркăнтарма ĕлкĕреймен. Тăшманăн танкĕ хăйĕн гусеницисемпе виçĕ паттăр героя таптаса вĕлернĕ. Виçĕ боец-казах геройла вилни çинчен хуйхăллă хыпар часах пĕтĕм Н-ски чаçа сарăлнă. Совет воинĕсем гитлеровецсене татах та хаяррăнрах таварма тупа тунă. Бронебойщиксем Прокопий Селезневпа Мавлин Авгумбаев çав кунах нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ, çунтарса янă.

* * *

Сумы облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ иртнĕ уйăх хушшинче оккупантсен чугунçул тăрăх пыракан 8 эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 5 паровоз, 87 вагон тата хĕçпăшалпа боеприпассем тиенĕ 39 платформа пĕтнĕ. Вагон çĕмрĕкĕсем айĕнче сахал мар нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем вилнĕ. Партизансем хурса тухнă минăсем çине пыра-пыра кĕрсе тăшманăн 9 автомашини сирпĕнсе кайнă.

* * *

Лиль хулин (Франци) чи паллă урамĕсенчен пĕринче Франци патриочĕсем нимĕç офицерĕсен ушкăнĕ çине гранатăсем ывăтнă, 3 гитлеровеца вĕлернĕ. Нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем хулара арестсем тунă, анчах айăплă çынсене тытайман.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчик** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем, уйрăм участоксенче контратакăсем туса, нимĕçсене çирĕплетнĕ чылай сурчсенчен хĕссе кăларнă. Лищинин юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардеецсем хаяр çапăçура нимĕçсен 250 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Хулана хÿтĕлекенсем тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăюлăхпа тавçăрулăхăн тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Н-ски подразделенийĕн кухни пулнă çурта нимĕçсем çавăрса илнĕ. Çуртра пулнă старши сержант Петров винтовка тытнă та хĕссе пыракан гитлеровецсене тÿррĕн тĕллесе пере-пере вĕлерме тытăннă. Пĕр талăк хушши, подразделенири боецсем гитлеровецсене сирсе пăрахиччен, Петров юлташ çурта хăй аллинче тытса тăнă. Снайпер-старшина Василий Зайцев Сталинград урамĕсенче ултă кун хушшинче 58 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн разведчиксем противникăн çирĕплетнĕ районне çĕмĕрсе кĕнĕ те 7 дзотпа 3 блиндажа сирпĕнтерсе янă, пĕр тупă, 5 пулемет пĕтерсе тăкнă тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Н-ски чаçăн артиллерийĕ пенипе противникăнне артиллерин 2 батарейине пĕтерсе тăкнă тата тăшман пехотин ушкăнне сапаласа янă.

* * *

Нальчик районĕнче пирĕн чаçсем оборонăра тăрса йывăр çапăçусем туса пынă. Артиллерипе минометсенчен персе нимĕçсен 4 танкне çунтарса янă, войскăсем ларса пыракан 12 автомашинине çĕмĕрнĕ тата 5 орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противник пирĕн войскăсем вырнаçса тăнине çапăçупа разведка тума хăтланнă. Нимĕçсен разведка тăвакан 80 салтаклă отрядне çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче артиллеристсем сайра хутран хире-хирĕç персе тăнă. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн пехоти пĕр батальон ытла вилсе пĕтнĕ. Нимĕçсем халăх пурăнакан пункта тытса илме хăтланни пĕтĕмпех путланса ларнă. Каретников юлташ командир пулса ертсе пыракан минометчиксем тăшманăн пехоти пухăнса тăнă çĕре вут-çулăмлă тапăну туса 50 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Калинин партизанĕсен отрячĕ нимĕçсен халăх пурăнакан пĕр пунктри гарнизонне тапăннă. Питех те кĕтмен çĕртен пырса çапнă пирки противник хирĕç тăма та ĕлкĕреймен. Кĕске вăхăта пынă тытăçура партизансем оккупантсен гарнизонне пĕтерсе тăкнă, темиçе нимĕçе тыткăна илнĕ. Çав отрядри партизансемех часах противникăн колоннине тапăнса, 38 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем—2 пулемет, 30 винтовка, автомашина тата 2 походнăй кухня тытса илнĕ. Партизансем шоссе магистралĕ çинче икĕ кĕпере сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 409-мĕш сапернăй батальонĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Август Швенк çапла каласа панă: «Эпĕ штурмовой отрядра 1932 çултанпа тăнă. Штурмовиксен Ильцгофенри пухăвĕнче обер-штурмфюрер Карл Монс пире вăртăн хыпар пĕлтерчĕ. Вăл çапла каларĕ: «Кашни штурмовик хĕвелтухăçĕнче анлă çĕр участокĕсем туянас тата хуçалăхлă пулас вăхăт çывхарса килет», терĕ. 1942 çулхи январьте эпĕ секретлă пакет илтĕм. Штурмовиксен верховнăй руководстви çумĕнчи çĕнĕ çĕре куçарас тĕлĕшпе ĕçлекен штаб начальникĕн уполномоченнăйĕ — обер-штурмфюрер С. Каше мана — Киев районĕнче 70 гектар çĕр илме кандидата тăратни çинчен пĕлтерчĕ. Часах мана фронта илчĕç. Халĕ ĕнтĕ нимĕçсене çĕнĕ çĕре куçарас тĕлĕшпе хăтланни нихăçан та пурнăçа кĕреймИ ăссăр фантази пек туйăнать мана. Мана вырăссен листовкисене вулама тÿрĕ килнĕ. Вĕсенче—кашни нимĕç салтакĕ, вăл хĕçпăшала пăрахмасан, вырăссен çĕрне виçĕ аршăн туянĕ, тесе каланă. Нимĕçсен нумай салтакĕсем вырăссем пама пулнă çав çĕре туянчĕç те ĕнтĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Воронеж облаçĕнчи Марьевка ялĕнчи мĕнпур хресченсене хăваласа пухнă та вĕсене кунĕн-çĕрĕн колхоз тырпулне çаптарнă, тыррине нимĕçсем валли ăсатма хатĕрлеттернĕ. Октябрĕн 14-мĕшĕнче такăшĕ молотилкăна стройран кăларнă. Ĕçленĕ çĕре пырса çитнĕ гитлерла палачсем 9 колхозникпе колхозницăна персе пăрахнă. Кудинов колхозника вĕсем вилес патне çитичченех хĕненĕ, тепĕр кунне вăл ĕçе тухайман. Нимĕç вăрă-хурахĕсем унăн килне çĕмĕрсе кĕнĕ те, унăн 70 çулхи амăшне Марфа Ивановнăна, арăмне Василиса Прохоровнăна тата виçĕ ачине персе пăрахнă. Палачсем Кудинова хăйне çыхнă та кăмакана пăрахса, пÿртне вут тĕртнĕ. Гитлеровецсем хресченсене пушара сÿнтерме чарнă. Пушарпа 36 килĕ, шкул тата ытти çуртйĕрсем пĕтнĕ.

Танксен колоннине тума

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Машинно-тракторнăй станцинчи трактористсемпе комбайнерсем тата служащисем танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Танксен колоннине тума вĕсем кашнинех пĕрер-икшер уйăхри ĕçукçине параççĕ.

Федотов юлташ ертсе пыракан трактор бригади хăйĕн тракторпа ĕçлемелли çулталăкри планне 130 процент тултарнă. Бригада членĕсем танксен колоннине тума 18.300 тенкĕ, бригадир Федотов юлташ 3.000 тенкĕ пачĕç.

Бригадир Мартянов юлташ та танксен колоннине тума 3.000 тенкĕ, трактористсем А. Оськинпа М. Семенов кашнинех 3.000-шер тенкĕ, комбайнер Михайлов—2,5 пин, ученица Васильева—1 пин тенкĕ пачĕç.

МТС-ра ĕçлекенсем ку таранччен «Тракторист Чувашии» тума 50 пин тенкĕне яхăн пама çырăнчĕç, вăл шутран 28 пин тенкине хывнă та ĕнтĕ.

ЕТĔРНЕ. Машинно-тракторнăй станцин трактористĕсемпе комбайнерĕсем Елчĕк районĕнчи трактористсем танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухма чĕнсе калаттине пысăк хавхаланупа йышăнчĕç. Вĕсем çак ĕç валли 11 пин тенкĕ укçа пухса пачĕç. Комбайнер В. Токсубаев юлташ танксен колоннине тума 900 тенкĕ, комбайнер К. Москалин юлташ 800 тенкĕ, тракторист М. Дербенев юлташ 700 тенкĕ панă.

И. ЛЬВОВ.

Сталинград çыннисем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Çак кунсенче Сталинграда кам самантлăха та пулин курнă, вăл хулан хальхи сăн-сăлли патне нихăçан та манмĕ. Хула тĕпĕпе хуралса ларнă, тупăсемпе бомбăсен çулăмĕпе кăмрăкланнă. Юлашки кунсенчен пĕринче кăна нимĕçсем хулан çурçĕр-хĕвеланăç хĕррине 2.000 бомба ытла пăрахнă. Бомбăсем кассăн-кассăн тăкăннă. Çĕр кисреннĕ. Анчах çав кун та нимĕçсем ăнăçу тăвайман. Сталинград чăтăмлăн тÿссе ирттернĕ.

Хула çыннисене нимĕçсем нумай асаппа хĕнхур кÿчĕç. Анчах та тăшмана хаяррăн курайманни хĕрарăмсемпе ачасен куççулĕсене типĕтрĕ. Халиччен паллă пулман çынсем геройсем пулса тăчĕç, мирлĕ граждансем — салтаксем пулчĕç. Хĕрлĕ Çарăн регулярнăй войскисемпе алла-аллăн тăрса, Сталинградăн трактор заводĕнчи рабочисем хăйсен тăван хулишĕн çапăçаççĕ. Вĕсене атакăна слесарь—коммунист Салуткин юлташ ертсе каять. Механика институчĕн кафедра руководителĕ Пащенко истребительсен отрячĕн штаб начальникĕ пулса тăнă. Сталинградшăн пыракан çапăçусенче Толдыкин, Москалев комсомолецсем тата трактор заводĕнчи ытти рабочисемпе служащисем чапа тухрĕç. Завод-воин, çавăн пек ят пачĕç ăна боецсем.

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче бомбăсемпе снарядсем кунĕн-çĕрĕн çурăлаççĕ. Хăшпĕр цехсем ишĕлнĕ, урамĕ-урамĕпе çунса кайса кăмрăкланнă. Анчах çынсем малтанхи пекех хăйсен вырăнĕсенче тăраççĕ.

Вилĕм çынсене хыçранах йĕрлесе çÿрет, анчах çынсем ĕçе пăрахмаççĕ, вĕсем кирлĕ пулсан вилĕме те паттăррăн йышăнма хатĕр. Çăкăр завочĕн механикĕ Павел Козанцев 60 çула та çитнĕ ĕнтĕ. Унăн ешĕл сад ăшĕнче ларакан çуртне нимĕçсен бомбисем çунтарса янă. Бомбăсем пăрахнă вăхăтра пĕринче унăн арăмĕ йывăррăн аманнă. Вăл юн нумай çухатнипе Козанцев аллинчех вилсе кайнă. Çакăн пек хуйăха Сталинградăн ватă рабочийĕ тÿссе ирттерейместь пек туйăнатчĕ. Анчах вăл хуйхха çĕнтерчĕ, парăнмарĕ, вăл хăйĕн тăван хули пекех çирĕп пулчĕ. Вăл хăйĕн ывăлĕпе пĕрле завод поселокне куçса пынă та унтан пачах та тухмасть. Вăл хăйне валли яланах ĕç тупать — Сталинграда хÿтĕлекенсене мĕнпе те пулин пулăшмалла-çке-ха! Çурăлакан снарядсемпе бомбăсен ванчăкĕсем айĕнче, пульăсем шăхăрса тăнă çĕртех Сталинград рабочийĕсем хăйсен цехĕсене пуçтаранаççĕ, вĕсем станоксем умне тăрса, ĕçе тытăнаççĕ.

Икĕ уйăх хушшинчи çапăçусем боецсене те, граждансене те пиçĕхтерсе çирĕплетрĕç. Умра йывăрлăхсем сахал мар-ха, çĕнĕ испытанисем пайтах тÿссе ирттерме лекет. Нимĕçсен командованийĕ хулана тытса илме мĕнпур вăйран тăрăшать. Юлашки кунсенче фронтăн ансăр участокĕнче нимĕçсем атакăна темиçешер дивизи тата çĕршер танк кĕрте-кĕрте яраççĕ. Хаяр çапăçусенче Сталинград çыннисем нимĕçсене пысăк сухатусем кÿреççĕ.

Çав çухатусене нимĕç офицерĕсем те пытарса хăварма пултараймаççĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç офицерĕн çырăвне тупнă, унăн хушаматне пĕлме май килмен. Çав çырура çапла каланă: «Эпир чи йывăр кунсем тÿссе ирттертĕмĕр, унашкал йывăр кунсем ман пурнăçра пулман... Чугунçула тытса илес тесе, эпир ансăр фронтпа куçса пытăмăр. Сасартăк эпир противникăн танкĕсем пире умран та, хыçалтан та, сулахайран та, сылтăмран та хупăрласа илнине пĕлтĕмĕр. Вара çакăнта танксен чи хаяр çапăçăвĕ пулса иртрĕ, унашкаллине эпĕ нихăçан та курман. Пирĕн ретсем минутăсерен пушанса пычĕç. Пирĕн çинелле килекен противникăн танкĕ пирĕн танка 200—300 метртан персе аркатрĕ. Снаряд çавăн пек тÿррĕн лекнĕ хыççăн танкра мĕн пулса иртнине эсĕ хăвах чухласа илме пултаратăп. Пылчăк, тар тĕтĕмĕ, юн. Манăн водителĕн хырăмĕнчен пыршисем сирпĕнсе тухрĕç, башеннăй стрелокăн хăрах ури çурри татăлса кайнă, ытти икĕ стрелокăн ÿчĕсем ăшне осколоксем кĕрсе тулнă, манăн ура çĕмĕрĕлчĕ. Унтан пирĕн çине çавтери вăйлăн пеме пуçларĕç те, пирĕн ирĕксĕрех каялла чакма лекрĕ. Çакă вăл мĕне пĕлтернине эсĕ чухласа илме те пултараймастăн. Кам çакна пĕрре тÿссе ирттернĕ, унăн Российăна урăх нихăçан та килес килмĕ. Манăн нервăсем пĕтĕмпех хавшаса çитрĕç. Христиан, эсĕ халлĕхе унтах пулнишĕн савăн. Эсĕ манăн шухăшсене пĕлетĕн, анчах та мана халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех йăлăхтарса çитерчĕ».

Нимĕçсен йытăкĕтĕвĕсем Атăл хĕрринчи крепость çинче хăйсен шăлĕсене çĕмĕреççĕ.

Н. МАРКОВСКИЙ.
(ТАСС спецкорĕ).

Землякеем çырăвĕсем

Фронт линийĕн леш енче)*

Умра хуп-хура уй сарăлса выртать. Лапамрах вырăнсене сарă курăк, вырăнĕ-вырăнĕпе пиçен хупласа илнĕ. Кунти уйхирсенче выльăх кĕтĕвĕсем çӳренине курма, кĕтӳçĕ хăйĕн шăхличипе чуна киллентерекен юрăсем шăрантарнине итлеме, çынсем ушкăнăн-ушкăнăн уйхирте хавассăн ĕçленине пăхса савăнма тĕл килмерĕ. Уйхир умра тем пек анлăн курăнса выртать пулин те унта пушă, никам та çук.

Акă ял—Малево ялĕ. Вăл вилĕм тумĕпе витĕннĕ пек курăнать. Кунта икçĕр виçĕ килтен хĕрĕх виçĕ çурт кăна юлнă. Урамсем çара, унта-кунта ишĕлтерсе антарнă çуртсем, карăнса тăракан хура юпасем, кăмака мăрйисем, кĕл, хăрăм. Урамра пĕр сас-чĕвĕ те çук. Ахаль чухне чăх-чĕпсем кăтиклени, хур-кăвакалсем какăлтатса çӳрени, йытăсем вĕрни те яла илем, чĕрĕлĕх, чунлăх кӳнĕ. Халĕ вĕсем çук. Йытăсемпе кушаксене пере-пере вĕлернĕ, выльăх-чĕрлĕхсене, кайăк-кĕшĕксене нимĕçсем çисе е илсе кайнă. Яла йĕп юлмиччен çаратнă, çунтарса ĕнтнĕ.

Çынсем урама тухса çӳреме, пĕр-пĕринпе курнăçса, кусран пăхса тусланăн, ирĕклĕн, кăмăлтан калаçма пултараймаççĕ. Урамра кампа та пулин тĕл пулса сăмах хушма е ятран чĕнме хăраççĕ. Кашни çын кăкăрĕ çинче хăма татки çакăнса çӳрет. Çак хăма татки çине кил тата список тăрăх шутланакан номера çырнă. Хăма таткине мăйран çакса çӳремен çынăн кунçулĕ часах татăлать.

Урамра симĕс тумтирлĕ нимĕç утса çӳрет. Ахăртне, кăкăр ачи, е тин çеç калаçма вĕреннĕ ача ĕсĕклесе макăрма пуçласан, унăн амăшĕ вутра пулнă пек хыпса ӳкет, ун пек чухне вăл ачине лăплантарас тесе тем тума та хатĕр. Ача амăшĕ йĕре-йĕре сăпка умне е ачине кăкăр çумне ыталаса урай варрине кайса тăрать, аякран чӳрече витĕр урамалла пăхать:

— Шăплан чунăм, шăплан,—тет вăл куççулне шăлса,—авă, урамра нимĕç çӳрет!..

Нимĕç! Мĕнтери усал та тискер, мĕнтери путсĕр те ирсĕр сăмах вăл. Нимĕç—вăл миллионшар ачасен, çамрăксен, атте-аннесен, туссемпе юлташсен пурнăçне, вĕсен телейĕпе савăнăçне, ырлăхĕпе канăçне туртса илчĕ, асап айне пăрахрĕ.

Урам тăрăх лав иртсе кайт-и е инçетрен мотор кĕрленĕ сас илтĕнет-и,— амăшĕн ачине çак тискер сăмаха калама тивет:

— Нимĕçсем килеççĕ.

Ачасем вара кĕтессе е сĕтел айне лăпчăнса лараççĕ, е кăмака хыçне, е сакай айне кĕрсе пытанаççĕ. Ача амăшĕсем улăмран, мăян курăкĕнчен çĕрулмипе хутăштарса пĕçернĕ пашалу таткине хĕве-и, кăмакари кĕл ăшне-и тирпейлĕн пытараççĕ.

— Нимĕç килет,—теççĕ ассăн сывласа.

Нимĕç! Вăл чи усал хура çăхан, урса кайнă йытă, выçăхнă кашкăр. Вăл санăн киле кĕрсен, пуринчен малтан, чыхăнса кайиччен çиет, эсĕ ачусем валли хатĕрленĕ апата çиет, вара хĕрачуна е арăмна пусмăрласа намăса кĕртет, пур пек пурлăхна шăпăрпа шăлсах пуçтарса илет, кайран вара персе вĕлерет е килçуртне вут тĕртсе çунтарать, ачусене, аçу-аннӳне, йăмăкна—пурне те вутта пăрахать, унтан кӳрше каять.

Пĕрмаях шиклĕхре пурăнни кунти çынсене ыйхăран тата канăçран татнă. Нимĕç кӳрсе килнĕ вилĕм çынсемпе пĕрлех çӳрет, вилĕм кашни утăмрах таса чĕреллĕ ачан пурнăçне, çитмĕл çулхи айăпсăр старикĕн е тин çеç çитĕннĕ хĕрачан пурнăçне çăтса яма пултарать, мĕншĕн тесен—ялта нимĕç.

Малево ялĕн урамĕнче юн кӳлли типмен-ха. Хвостовичири лагерьте ирĕксĕр ĕçлесе халтан ӳкнĕ, выçăпа аптăранă çамрăксем—Егор Фомин, Василий Паршиков, Алексей Игнатьев, Дмитрий Генералов тата ыттисем мĕн те пулин çимелли тупма киле таврăннă. Яла пырса кĕнĕ чухне вĕсене нимĕç курнă, вăл ял çамрăкĕсене партизансем тесе пӳлсе тăнă, ытти бандитсене чĕннĕ, вара урам варринчи виселица çине çакса вĕлернĕ. Кайран çак çамрăксен тăванĕсене, пĕр çын юлмиччен, çакăнса тăракан вилесем умĕнче персе вĕлернĕ.

Ял çинче вилĕм мĕлкийĕ çакăнса тăрать. Çутă кун çук унта. Унта пурнăç мар—тамăк.

II.

Ял варринчи площадьре икĕ мăн юпа. Вĕсене пĕр-пĕринпе юман йывăççинчен чутласа тунă çирĕп кашта çыхăнтарать. Кашта çумне тимĕр ункăсем пăрса кӳртнĕ. Вунникĕ ункă. Вĕсенчен çĕрелле усăнса, сӳсрен явнă вĕренсем çакăнса тăраççĕ. Кашни вĕрен вĕçĕнче йĕплĕ пăралукран тунă кăшăл.

Хăрушă юпасемпе кăшăлсем. Хвостовичири хресченсем ăна «вилĕм хапхи» теççĕ. Ун çине çакса мĕн чухлĕ çынсен кунçулне вăхăтсăр татман-ши? Хвостовичире те, ытти ялсенчи пекех, нимĕç урамра иртсе пыракан, е ăнсăртран тĕл пулакан кирек кама та тытма, çакса тата персе вĕлерме пултарать. Хӳтĕленме пултарайман ача-пăчасене, хĕрарăмсене, карчăк-стариксене вĕлернине нимĕçсем «çĕнĕ йĕрке» теççĕ. Вĕсем çынсене килçуртсенчен тухма, пĕр-пĕринпе курнăçса калаçма чарнă.

Пĕррехинче, вăйлă çăмăр çунă хыççăн тепĕр кунне, Журиничири хĕрачасем çывăхри вăрмана кăмпа пухма кайнă. Вĕсем саккăрăн пулнă. Каялла киле таврăннă чухне вĕсен нимĕç офицерĕпе тĕл пулма лекнĕ.

Офицер ют чĕлхепе темскер ыйтнă, анчах хăраса ӳкнĕ хĕрачасем нимĕçе ăнланман. Пĕр хĕрачи каланă:

— Пĕлместпĕр эпир сан чĕлхӳна.

— А, русь! Не хот понимайт! Партизан, расстреляйт понимайт!—тесе кăшкăрашнă офицер. Вара кабуртан пистолет кăларнă та çухрашса тăракан хĕрачасем çине пеме пуçланă.

Пăшалран пенĕ сасса илтсе, уя сиксе тухнă нимĕçсен банди хĕрачасене тытнă, вĕсене ушкăнпа намăса кĕртнĕ, кайран Хвостовичине илсе пырса çакса вĕлернĕ. Кун хыççăн хĕрачасен тăван ялне карательнăй отряд кайнă. Вăл ялти икçĕр аллă килçурта вут тĕртсе, вутра ача-пăчасене, хĕрарăмсене, стариксемпе карчăксене тăвата çĕр çынна çунтарса янă.

Хвостовичире вилĕм хапхисĕр пуçне тата салотопка тунă. Салотопка вăл—пысăк хуран. Ку хуранра халиччен вилĕ выльăх-чĕрлĕхсене пĕçерсе çу шăратнă. Халĕ çынсене чĕрĕлле кĕртсе лартаççĕ, вара хурана тимĕр питлĕхпе витеççĕ, питлĕхе винтăласа—сывлăш кĕмелле мар хупласçĕ. Унтан вут чĕртсе, хурана майĕпен вĕрилентерсе, çынсене пăчăхтарса, асаплантарса вĕлереççĕ.

Прасковья Тихоновна Соловьева, унăн вунпилĕк çулхи ачи, Марина Ермакова тата темиçе вуншар совет çыннисен пурнăçне çакăн пек тискеррĕн татнă.

Анчах пирĕн хĕрарăмсем тем пек асаплă вилĕме те чĕрери хаяр курайманлăхпа, нимĕçсене питлесе, ылханса, куççуль тăкмасăр кĕтсе илеççĕ.

Нимĕçсен бандисене хирĕç Хĕрлĕ Çар ретĕнче кĕрешекен боецăн—Морозовăн арăмне салотопкăна пăрахса вĕлерме илсе кайнă чухне, вунпĕр çулхи хĕрачи амăшĕнчен ыйтнă:

— Анне, ăçта илсе каяççĕ сана?

— Хвостовичине,—тенĕ амăшĕ, Феодосия Михайловна.

— Унта мĕн тăваççĕ санпа?

— Çакса вĕлереççĕ е салотопкăра шăратаççĕ.

— Аннеçĕм, эпĕ те санпа пĕрлех пулăп,—тенĕ хĕрача.—Аннеçĕм, пурпĕрех пĕрле вилĕпĕр, аннеçĕм! Атте пирĕншĕн тавăрĕ,—тенĕ амăшне хĕрача. Вăл амăшĕн аллине хытă-хытă чăмăртаса малалла утнă, вăл амăшĕпе пĕрле хăйĕн пурнăçне салотопкăна пăрахтарнă.

Йĕрет халăх, йĕрет çĕр! Асаплăн сывлать кунти çĕр. Нимĕçсем мăя йĕплĕ кăшăлпа пăваççĕ-и, чĕрĕлле салотопкăна пăрахаççĕ-и, фронт линийĕн леш енчи совет çынни унăн мăйне нимĕç алли пăвнă чухне çут тĕнчен сывлăшне юлашки хут тарăнăн сывласа илсе кăшкăрать:

— Илтсем, тăван çĕршывăм! Илтсем, тăван совет халăхĕ! Вĕлерĕр нимĕçсене, пирĕн çĕр çинче пĕр нимĕç юлмиччен вĕлерĕр! Сывă пултăр Совет влаçĕ!

III.

Вăрман кĕтесси тата бомба çĕмĕрсе ишĕлтерсе антарнă пӳрт хушшинче çарауран, саплăклă кĕпе-йĕм тăхăннă, вуник-вунвиçĕ çулхи сар çӳçлĕ ача тăрать. Вăл яла тин çеç килсе кĕнĕ боецсем çине хăйĕн чакăр куçĕсемпе тимлĕн пăхать, пĕрмаях кĕпе çанни вĕçне пӳрнисемпе хыпаласа илет. Сайра хутран куç харшисене пĕрсе, куçĕсене хĕссе айккинелле пăхса илет.

Боецсем патне командир килсе çитрĕ. Ним шарламасăр тăракан ача тӳрех командир патне утса пычĕ те:

— Пичче, пичче, пар мана наган,— терĕ. Вăл командира шăтарас пек пăхса илчĕ, вара куçĕсемпе лейтенантăн пилĕкре çакăнса тăракан кабурĕ çине тăрăнчĕ. Хăй çавтери хумханать вара.

— Наган!.. Мĕн тума сана наган? — ыйтрĕ унтан пĕр боец.

Ача сăмах хушнă боец патне утса пырса ун çине сивĕ куçпа пӳ тăрăх виçсе тухрĕ, унтан çиллĕ сасăпа каларĕ:

— Нимĕçсене вĕлерме!

— Эсĕ кам пулатăн вара?—ыйтрĕ унтан лейтенант.

— Вовка! Володька,—тавăрчĕ ача.— Пичче, пар наган! Эпĕ разведкăна каятăп, нимĕçсене вĕлеретĕп...

Боецсем пĕр-пĕрин çине кула-кула пăхса илчĕç. Вовка ним шарламасăр пуçне усса тăчĕ. Тутисем унăн чĕтреме пуçларĕç, пӳрнисемпе саплăкри çипписене турта-турта татма тытăнчĕ. Вăл кĕç-кĕç макăрас пек тăрать, унăн куççулĕ пухăнса та çитрĕ-и тен, анчах Вовка, хăйне хăй тыткалама пĕлекенскер, сасартăк пуçне çĕклесе боецсене тепĕр хут сăнаса тухрĕ, вара ассăн сывласа илчĕ те чĕререн мĕскĕнĕн тухакан сасăпа калаçма пуçларĕ:

— Нимĕçсем аттене вĕлерчĕç. Шăллăма—Сенькăна илсе кайрĕç...

Пĕр боец ăна алла илсе çĕклерĕ. Вовка чĕререн ыратса тухакан куççульне пытарма пултараймарĕ, пит çăмарти тăрăх пĕрчĕн-пĕрчĕн куççуль юхтарса, ашшĕне мĕнле вĕлерни çинчен калама тытăнчĕ.

— Эсир ял патнелле çывхарнине туйса, нимĕçсем тарма хатĕрленме пуçларĕç. Анкартинчи тупăна туртса кăларма аттене лаша вырăнне кӳлчĕç. Тупă йывăр, ăçтан ăна атте туртма вăй çитертĕр. Унăн вăй çитеймерĕ, пулăшма кӳршĕри асаттене чĕнчĕ. Офицер аттене питрен пистолетпа çапрĕ, атте йăванса кайрĕ.—Вовка ассăн сывласа, сывлăш çавăрса илнĕ хыççăн, хăйĕн хуйхи çинчен малалла калама тытăнчĕ.

— Атте ӳкрĕ, офицер ăна персе пăрахрĕ... Сенька!.. Сенька, пачах пĕчченкĕскер: Сенька пӳрт патĕнчи хӳтлĕхре пытанса ларатчĕ, анчах ăна пĕр нимĕç курчĕ. Сенькăна ураран ярса тытрĕ те, çурăм хыçне çавăрса ывăтса тăсса илсе кайрĕ.

— Анне макăрать, эпĕ макăрмастăп... —терĕ вăл ачалла, куçĕнчен тумлакан куççульне кĕпе çаннипе шăлса илсе. Вара лейтенант çине пăхрĕ те, хăйĕн калавне сасартăк вĕçлерĕ:

— Пар наган! Эпĕ нимĕçсене вĕлеретĕп...

Командир Вовкăна алла илчĕ те, ăна хытă-хытă хăй кăкăрĕ çумне ыталаса чуптурĕ, пуçран ачашларĕ. Вовкăна алăра тытса боецсен ушкăнĕ варрине кĕрсе тăчĕ.

— Эсĕ, Вовка, çамрăк-ха. Аçушăн, Сенькăшăн эпир тавăратпăр, пуриншĕн те тавăратпăр, Вовка!

— Тавăрăр, пирĕн çĕр çинче пĕр нимĕç юлмиччен вĕлерĕр!—тесе макăрса пычĕ боецсем патне Вовка амăшĕ.— Пуриншĕн те тавăрăр!

МИХ. ЯКИМОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ

*) Командованин заданийĕ тăрăх тăшман тылĕнче пулнă хыççăн Н. юлташ фронт линийĕ урлă каçса каялла таврăнчĕ. Ку материала фронт линийĕн леш енче пулса иртнисем çинчен çырнă.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче 168 гектар сухаланă

СĔНТĔРВĂРРИ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем колхозниксемпе колхозницăсем Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă тĕле кĕрхи çĕртме туса пĕтерессишĕн тимлĕн кĕрешеççĕ. Ку тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли эрнене районри кашни колхозах активлăн хутшăнчĕ.

Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район пурĕ 5.195 гектар сухаласа кĕрхи çĕртме тумалли плана 86,5 процент тултарчĕ. Фронтри пек ĕçлемелли эрнен малтанхи кунĕнче—ноябрĕн 1-мĕшĕнче районри колхозсем пурĕ 168 гектар сухаларĕç, сухара 385 лаша ĕçлерĕ. Нумай колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç кунран-кун вăйланса пыни сисĕнет. Паянхи куна районра 27 колхоз, кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçласа, хура çĕртме тума тытăнчĕç.

Ĕçре социализмлă ăмăртăва сарса пынипе районри кашни колхозах Октябрь уявĕччен кĕрхи çĕртме планне пурнăçламалла.

С. ЖЕЛЕЗКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Октябрь уявне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илетпĕр

ЕЛЧĔК, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне район хĕл умĕн кок-сагыз акмалли плана пурнăçларĕ. Çĕршыв оборонине тĕреклетме питех те кирлĕ культурăна районри колхозсем пурĕ 175 гектар акса хăварчĕç. Çавăн пекех район выльăх-чĕрлĕх валли силос хывас плана та пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕ. Кăçал пурĕ 5.015 тонна силос хывнă.

Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри 12 колхоз кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе Октябрь уявĕччен туса пĕтерес тĕлĕшпе пыракан фронтри пек ĕçлемелли эрнене пур колхозсем те хутшăнчĕç. «Хунав», «Знамя» тата ытти чылай колхозсем кĕрхи çĕртмене графика çирĕп пăхăнса туса пыраççĕ.

В. МАРКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçларăмăр

ИШЛЕЙ. Мамăш ялсоветĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Фермăсенче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем выльăхсене хĕл каçарма лайăх условисем туса парассишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ.

Ялсоветĕпе илсен, паянхи куна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана колхозсем мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 122 процент, сыснасем енĕпе 110 процент, сурăхсем енĕпе 103 процент пурнăçланă. «17-ый Партсъезд» колхоз (председателĕ Романов юлташ) выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе уйрăмах лайăх ĕçлет. Ку колхозăн пур фермисенче те выльăхсен хисепĕ планпа пăхнинчен ытларах. Иртнĕ çулсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çулран-çул пурнăçласа пыман Буденный ячĕпе тăракан колхоз та кăçал (председателĕ коммунист В. Гуськов) пур йышши выльăхсем енĕпе те плана ăнăçлăн тултарчĕ; ĕнесем, сурăхсем валли çĕнĕ витесем туса лартрĕ.

Ялсоветне кĕрекен пур колхозсем те силос хывас плана пурнăçа кĕртрĕç. План тăрăх пурĕ 180 тонна хывмалла пулнă пулсан, паянхи куна 200 тонна силос хывнă.

П. РЫКОВ,
Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

ВĔРЕНЕКЕНСЕН УЯВ УМĔНХИ ĂМĂРТĂВĔ

ТĂВАЙ. Районри шкулсем Октябрьти социализмлă аслă революци XXV çул тултарнине вĕренӳ ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе паллă тума хатĕрленеççĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн Тĕмерти вăтам шкулти 6-мĕшпе 10-мĕш классенче вĕренӳ пахалăхĕ тата шкула çӳресси нумай ӳсрĕ. Ку классенче вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем патне уяв парнисем ярса парас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Учительсем боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе хĕрӳллĕн хутшăнаççĕ. Вĕсем кашниех пĕрер ăшă япала панă. Танксен «Народный учитель» ятлă иккĕмĕш колоннине тума 895 тенкĕ укçа пухнă. ГТО тата БГТО значокĕсен çуллахи нормисене парас тĕлĕшпе пулса иртнĕ кроса 176 вĕренекен тата 12 учитель хутшăннă. Вĕсенчен 74 çын ГТО тата 67 çын БГТО значокĕсен нормисене панă.

Ăмăртăва хутшăннă хыççăн Енĕш Нăрвашри вăтам шкул (директорĕ П. Алексеев юлташ) 408 кубометр вутă хатĕрленĕ. Чӳтейри тата Çĕнĕ Пуянкассинчи туллимар вăтам шкулсем хĕл каçмалăх вутă турттарса хунă.

В. ИЛЬИН.

Ют çĕршывсенче

Иден тухса калани

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден тред-юнионсен Шотландири конференцийĕнче октябрĕн 30-мĕшĕнче сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче: Британи империйĕ хăй тĕнчери держава пулса тăнинчен пăрăнма пултараймасть, тенĕ. «Пирĕн историпе пирĕн географиллĕ положени, — тенĕ Иден,— пиртен пĕтĕм тĕнчери интерессене тытса тăракан пĕтĕм тĕнчери держава пулса юлма ыйтать. Тĕнчери пĕтĕмĕшлĕ лару-тăру та çакнах хушать. Пирĕн вăрçă вăхăтĕнче те, çавăн пекех вăрçă хыççăн та тĕнчере питех те кирлĕ вырăн йышăнса тăма тивет».

Вăрçă хыççăнхи ыйтусем пирки чарăнса тăрса, Иден çапла каланă: «Мир вăл — эпир хамăрăн вăйсемпе тума тивĕçлĕ тата малашне ытларах вăй хурса упраса тăма тивĕçлĕ япала пулса тăрать. Пирĕн ăна валли практикăллă та ĕçлĕ организаци туса хумалла, çавăн пекех тата ăна хӳтĕлеме тивĕçлĕ майсем тупмалла. Иртнĕ вăхăтра эпир çакна туман. Эпир татса пама тивĕçлĕ татах та тепĕр проблема — мĕнпур проблемăсенчен чи тĕксĕмреххи пур, çакă вăл — Германия. Гитлер вăл — ăнсăртран сиксе тухнă япала мар, вăл симптом. Вăрçă хыççăнхи ырă кăмăллă та йăваш чунлă атмосферăра çакăн çинчен никам та ан мантăр. Гитлерпа гитлеризм хăйĕн мĕнпур тискерлĕхĕсемпе сирĕлсе иртсессĕн те, пирĕн умра Германи проблеми малашне те тăрĕ-ха. Ютçĕршывсене тытса илес хапсăнчăк ĕмĕтпе нимĕçсем эпир астăвасса ик хутчен тата иртнĕ çĕр çул хушшинче 5 хутчен çĕкленнĕ. Çакă Германипе Европа проблемине пирĕн вăхăт, сыхăлăх тата тимлĕх пулсан кăна татса пама пулать. Иртнĕ вăрçă хыççăнхи пек эпир хамăр ĕмĕтленнинине чăн-чăн пурнăçра пурри вырăнне йышăнни чи ăссăр япала пулнă пулĕччĕ. Ку хутра Германи проблемине эпир яланлăхах татса пама тивĕçлĕ».

«Вăрçă хăйĕн пачах та çĕнĕ енĕсене палăртма тытăнать, — тенĕ малалла Иден. — Эпир халĕ ĕнтĕ пур çĕрте те мар оборонăра тăратпăр. Ла-Манш тĕлĕнче, çавăн пекех тата Франци çурçĕрти çыранĕпе çыранран шаларахри территорисем тĕлĕнче пирĕн вăйсем пуçпулса тăракан пулчĕç. Пирĕн авиаци Германи çийĕнче кăнтăрла вĕçсе çӳреме тата Милан çине бомбăсем пăрахма пултарать. Германи авиацийĕ пире пыра-пыра çапнинчен эпир халĕ Германие темиçе хут ытларах пыра-пыра çапатпăр. Çав тапăнусем хĕл каçиччен татах та ытларах вăйланса пырĕç тесе шантарса калама ирĕк ыйтатăп», тенĕ Иден юлашкинчен.

Румынире вăрçă инваличĕсем выçă вилес шăпа умĕнче тăраççĕ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçă инваличĕсене тата тăлăха юлнă ачасемпе хĕрарăмсене пурăнма май туса парас тĕлĕшпе Румыни правительстви нимĕнле мерăсем те йышăнмасть. Нумай инвалидсем выçă вилес шăпа умĕнче тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем валли учрежденисенче те, предприятисенче те вырăн тупăнман. Тимишоарта вăрçă инваличĕсем, пурăнма нимĕнле средствăсем те пулман пирки, 19 çын хăйсене хăйсем вĕлернĕ.

Благотворительнăй обществăсем пухакан укçа-тенкĕсем инвалидсене те, çавăн пекех тăлăха юлнă ачасемпе хĕрарăмсене те лекмеççĕ. Çав укçа-тенкĕсене тылра ларакан офицерсем валли банкетсемпе апатланусем тунă çĕре расходлаççĕ. Нумаях пулмасть Яссы хулинчи благотворительнăй общество вырăнти гарнизонри офицерсем валли банкет тунă. Çавăнта вăрçă инваличĕсем валли халăх хушшинче пухнă укçа-тенкĕне 400 пин лея расходласа пĕтернĕ.

США-ра ГИТЛЕРЛА ШПИОНСЕНЕ СУД ТУНИ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 26-мĕшĕнче Чикаго хулинче 6 çынна, вĕсем государствăна сутнă тесе айăпласа, суд тума тытăннă. Айăпланакансем—Америка гражданĕсем, нимĕçрен тухнăскерсем, пулса тăраççĕ.

Нью-Йоркра çавăн пек ĕçпех тата 3 çынна ответ тыттарма тăратнă. Тăшманла çĕршывсен агенчĕсене арестлесси малалла пулса пырать. Иртнĕ эрнере Техас тата ытти штатсенче 52 çынна арестленĕ.

Правительство 27 гитлеровеца, вăрçăччен Нью-Джерси штатĕнче пулнă Германипе Америка союзĕн тата ытти тĕрлĕ фашистла организацисен членĕсене, Америка гражданĕсен прависĕр тăратса хăварас ыйтăва пăхса тухать.

ЕГИПЕТРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле англичансен пехоти противникăн территорийĕ çинелле куçнă. Тыткăна илнисем пур. Енер бронетанковăй вăйсем хушшинче пысăк мар тытăçусем пулса иртнĕ. Çав тытăçусенче противника сухатусем кӳнĕ. Çапăçусем малалла пыраççĕ.

Октябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата ĕнер кăнтăрла Англи авиацийĕ противникăн самолетсем лармалли площадкисем çине тата ытти объектсем çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсенчен пенĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 31-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи войскисем çаплах малалла куçса пынă. Англи войскисем тытса илнĕ позицисене противник атакăланине пурне те сирсе пăрахнă. Тыткăна илнисем пур. Çĕрле Англин йывăр тата вăтам бомбардировщикĕсем тинĕс авиацийĕ пулăшса пынипе противникăн Крит утравĕ çинчи объекчĕсене çавăн пекех тата çапăçусен районĕнчи самолетсем анса лармалли площадкăсене атакăланă. Ĕнер кункаçиччен Англи авиацийĕ виçĕ пысăк операци туса иртернĕ. Çапла шутлаççĕ: истребительсем противникăн бронетанковăй вăйĕсен штабне ăнăçлăн тапăннă, çавăн чухне автотранспорта, бронемашинăсене, танксене тата палаткăсене пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Инçете вĕçекен самолетсем тăшманăн Мерса-Матрух районĕнче тăракан войскисем çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе противникăн палаткисене, автотранспортне тата радиостанцине вут хыпса илнĕ. Англи самолечĕсем Соллумпа Сидду-Баррани хушшинчи çул çине персе тăнă. Тăшманăн авиацийĕ кункаçиччен Англин тип çĕр çинчи войскисене тăватă хутчен тапăннă. Çав тапăнусене пурне те ăнăçлăн сирсе янă. Кункаçичченхи çапăçусенче противникăнне 13 самолет пĕтерсе тăкнă тата унсăр пуçне нумай самолетсене сиенленĕ.

Англичансен 5 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Гитлеровецсем Франци промышленноçне пĕтереççĕ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Францие оккупациленĕренпе нимĕçсем кунта шултăра тата вăтам предприятисене 8 пине яхăн хупса лартнă. Кăçалхи сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче кăна Германи влаçĕсем хушнă тăрăх 3 пин фабрикăпа завода ытла консервациленĕ. Чарăнса ларнă предприятисенчи оборудованисене Германие турттарса каяççĕ. Нимĕçсем Францирен çĕнĕ йышши станоксемпе автоматсем 50 пине яхăн илсе тухса кайнă та ĕнтĕ. Тĕслĕ металлсенчен хатĕрленĕ пайсене машинăсем çумĕнчен пурне те илсе Германие ăсатаççĕ.

БЕЛЬГИ РАБОЧИЙĔСЕНЕ ИРĔКСĔРЛЕСЕ ГЕРМАНИЕ ИЛСЕ КАЙНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсен влаçĕсем Бельги рабочийĕсене ирĕксĕрлесе Германие ăсатма тытăннă. Льеж районĕнче 20 çултан пуçласа 40 çула çитнĕ арçынсене пурне те ăсатма палăртса хунă. Оккупантсен çакă çĕнĕ мероприятийĕ Бельгири халăха питех те хытă тарăхтарса янă.

АНГЛИЕ АМЕРИКА ВОЙСКИСЕН ÇĔНĔ ЙЫШĔ ПЫРСА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Британи утравĕсем çине Америка тинĕс пехотин çĕнĕ йышĕ пырса çитнĕ.

—o—

Пĕлтерӳсем

Кăçалхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнчи лекцисен залĕнче октябрĕн 30-мĕшĕнчи инструкциллĕ докладра пулман докладчиксем валли

Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни çинчен

тепĕр хут инструкциллĕ доклад пулать.

Докладчикĕ—**Иванов** юлташ.

ВКП(б) горкомĕ.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче агитпункт çуртĕнче (Чувашская урам) **санитари сборонин вечерĕ** пулать.

Вечерăн программи:

1. «Хальхи самант тата санитари оборонин задачисем» темăпа доклад. (Докладчикĕ—ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ **Давтян** юлташ).
2. Художествăллă пай.

Билетсене РОКК-ăн пуçламĕш организацийĕсенче илмелле.

РОКК ОБКОМĔ.

Гитлерла Германин тылĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, ноябрĕн 1-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ)**. Юлашки вăхăтра пирĕн чаçсем Кавказ тăвĕсем патĕнчи тата Хура тинĕс хĕрринчи çапăçусенче нимĕçсен вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем тата тыткăна илнисем çумĕнче нумай çырусемпе ытти тĕрлĕ документсем тытса илнĕ.

Аяларахра эпир çав çырусемпе документсенчен хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр. Акă, темĕнле фрау Кельнран хăйĕн упăшки—капитан патне апрелĕн 17-мĕшĕнче çырнă çыру:

«Эсĕ пулман пулсассăн, эпĕ хамăн телейсĕр пурнăçпа тахçанах сывпуллашнă пулăттăм. Малашлăх пире татах та нумай инкексем кӳрĕ-ха. Эпир хăрушла вăхăтра пурăнатпăр, анчах вăрçăн вĕçĕ татах та хăрушларах пулĕ».

«Пирĕн нимĕн те çитмест,—тесе çырать Франц Шенансгрубер ефрейтор патне унăн арăмĕ,—шăматкун хампа пĕрле каçхи апат илмесĕрех кайрăм, мĕншĕн тесен, çăкăр çитмест. Çĕрулми те çук. Пĕлтĕр пурнăç кун пекех марччĕ». Çав ефрейтор патнех унăн ашшĕ июлĕн 27-мĕшĕнче çапла çырнă: «Нюренбургри пурнăç вăл—кивĕ юрă. Пахча-çимĕçсем пулман пулсан (çитменнине вĕсене те сахал параççĕ), çынсем татах та нумайрах вилнĕ пулĕччĕç. Çынсем питĕ начарланса пыраççĕ. Манран шăмăсем кăна тăрса юлчĕç. Эпир япăх çăкăра та пулин эрнере 3 кĕренке анчах илетпĕр пулсан, урăхла мĕнле пулма пултарĕ-ха ĕнтĕ вăл. Эпĕ кăнтăрла фабрикăра апатланатăп. Анчах каçхи апат валли нимĕн те çук. Хуçалăхра пĕтĕм ĕç «карланкăна тăрантарас» ыйту тавра çаврăнать. Хаклă Франц, Российăри событисем малашне мĕнле аталанасси çинчен хăвăн шухăшна çырса пĕлтер. Татах та мĕн те пулин кĕтмелле-и? Хăвăн пурнăçна шеллемесĕр тăни, çавăн пек йывăрлăхсем тӳсни кирлĕ-и?..»

Вилли Гельмут ефрейтор Герингенран ашшĕ патĕнчен илнĕ çыру та çавăн пекех кăтартуллă пулса тăрать: «Хаклă ывăлăм, санăн çыруна паян, июлĕн 27-мĕшĕнче илтĕмĕр. Такам пире пуçран чукмарпа çапнă пекех туйăнчĕ. Сана татах çапăçăва яраççĕ. Кайăр хăвăртрах, хăвăрăн пуçăрсене çав господасемшĕн хурăр. Тен, вĕсем пирĕнтен пуринчен те хăтăласшăн пулĕ. Хаклă ывăлăм, тăван çĕршывшăн кĕрешни çакă ĕнтĕ вăл. Анчах çав йĕк-сĕксем те тăван çĕршывăн «тавне» часах туйса илĕç тесе шанăпăр. Çакă вăл ыранах çапла пултăрччĕ тесе кĕтетпĕр эпир».

Вăрçăра вилнĕ паллă мар нимĕç патне амăшĕ çапла çырать: «Ыттисем тылра ларнă вăхăтра санăн татах çапăçăва хутшăнма лекет. Çак тĕрĕсмарлăх çинчен хыттăн кăшкăрса калас килет. Анчах та урăх вăхăтсем те çитĕç-ха... Айван ан пул, эпĕ мĕн калассине эсĕ ăнланса илĕн».

В. МЕДОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 972 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л